27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
22
ЭРНЕКУН
187(682) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ГОВОРОВА

ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, ТАРТУ хулинчен çурçĕртерехри районран наступлени пуçласа ярса, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, тăватă кун хушши наступлени туса пырса, 70 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 120 километр таран сарнă, халăх пурăнакан 1.500 пункта ытла ирĕке кăларнă, вăл шутра — МАГДАЛЭНА, МУСТВЭ, ЙЫГЕВА, АВИНУРМЭ ятлă пысăк ялсем.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах НАРВА хулинчен хĕвеланăçнерехре ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, тăшманпа çапăçса, виçĕ кун хушшинче 60 километр таран малалла кайнă, халăх пурăнакан 300 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ИЫХВИ, КЮРЕМЯЭ-КЮЛА, ВАСКНАРВА ятлă ялсем тата СОНДА ятлă чугун çул узелĕ.

Тăшман оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, СТАРИКОВ генерал-лейтенантăн, эстонецсен ПЭРНА генерал-лейтенантăн корпусĕ, СИМОНЯК генерал-лейтенантăн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантăн, ТРУБАЧЕВ генерал-майорăн, ЛОМБАК генерал-майорăн, АЛЛИКАС полковникăн, ТУТИЛОВ генерал-майорăн, ЩЕГЛОВ генерал-майорăн, БОРЩЕВ генерал-майорăн, ЛЯЩЕНКО генерал-майорăн, ЗИНОВЬЕВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ОДИНЦОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ВАСИЛЬЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОЧИТАЛИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ПЯДУСОВĂН, артиллери генерал-майорĕн РОГОЗИНĂН, ГНИДИН полковникăн, КАТУНИН полковникăн, ГЕРАСИМЕНКО подполковникăн, КОРПАЧЕВ полковникăн, ДЕГТЯРЕВ полковникăн, ЛИЗЮКОВ полковникăн, ЦВЕТКОВ подполковникăн, ПАТИФОРОВ полковникăн, ШТЕЙН полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВĂН, МИРОНОВИЧ полковникăн, КОВАЛЕВСКИЙ полковникăн. АЛЕЙНИКОВ майорăн, ФЕДОРОВ подполковникăн, БАРИЛОВ подполковникăн, САЕНКОВ подполковникăн, БАРШЕВ подполковникăн, ПРИМАЧЕНКО майорăн, КАРТАШЕВ подполковникăн, КОБОЗЕВ майорăн, КРАСНИК подполковникăн, ЧЕСНОКОВ подполковникăн, ГРИЦЕВ подполковникăн, КУЗНЕЦОВ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЫБАЛЬЧЕНКĂН, авиаци генерал-майорĕн АНДРЕЕВĂН, ХАТМИНСКИЙ полковникăн, ГРЕСЬКОВ полковникăн, МАТВЕЕВ полковникăн, МУХИН подполковникăн, МЕХАННИКОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БЫЧЕВСКИН, ЦВАНГЕР полковникăн, КУЛЯНИЦКИЙ подполковникăн, ВОРОБЬЕВ подполковникăн, АКАТОВ полковникăн, АФАНАСЬЕВ подполковникăн, КУЛЬТЯЕВ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОВАЛЕВĂН, БАХИЛИН полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, тăшман оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсçене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 20-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, ЛЕНИНГРАД фрончĕн паттăр çарĕсене, вăл шутра эстонецсен ПЭРНА генерал-лейтенантăн корпусне, нимĕçсен оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, тăшман оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи сентябрĕн 20-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БАЛТИКА ТАРĂХĔНЧИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, тăшман оборонине татнă та сентябрĕн 19-мĕшĕнче нимĕçсен Эстонин кăнтăр пайĕнчи оборонин питĕ вăйлă çирĕплетнĕ пунктне — ВАЛГА хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ТЫРВА хули, КАУБИ, ХЕЛЬМЕ, КОРКЮЛА, КААГЯРВЕ, ЛЕПА, ВИРЕШИ, МАЛУМУЙЖА, ЛЭСЯЦИЭМС ятлă пысăк ялсем.

РИГА хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем ПЛЯВИНАС хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 600 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВЕЛЭНА, ЛЫЗУМС, ЯУНГУЛБЕНЭ, ЦЕСВАЙНЭ, ЯУНАДУЛЫЭНА, ЛЫЭЗЕРЕ, ИРШИ, ОДЗИЭНА ятлă пысăк ялсем тата ЭЛСТЭ, ЯУНГУЛБЕНЭ, ДЕГАС, КЛИНТЕНЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БАЛТИКА ТАРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, артиллерипе авиаци йышлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, тăшманăн РИГА хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вăйлă та нумай ретрен тăракан оборонине татнă, тăватă кун хушши наступлени туса пырса, 40 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 120 километр таран сарнă.

Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем нимĕçсен оборонин çирĕплетнĕ паха пункчĕсене — БАУСКА, ИЕЦАВА, ВЕЦМУЙЖА ятлă пунктсене тата Хĕвеланăç Двина çинче — ЯУНЕЛГАВА, ТЕКАВА пункчĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 2.000 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—КУРМЕНЕ, СКАЙСТКАЛНЕ, БАРБЕЛЕС, БУКАС ятлă пысăк ялсем тата ДАУДЗЕВА, ТАУРКАЛНС, ЛАЦПЛЕСИС, ВЕЦМУЙЖА, МИСА, ИЕЦАВА чугун çул станцийĕсем.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ.

Румынин хĕвеланăç пайĕнче пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, ТИМИШОАРА хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 121 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 21 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БУДАПЕШТ ХУЛ ИПЕ ЧОП ХУЛИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПĂННИ

Сентябрĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Венгри столицине Будапешт хулине тата Ужгород хулинчен 25 километр кăнтăртарахри Чоп хулипе чугун çул станцине йышлăн вĕçсе кайса тапăннă. Нимĕçсемпе венгерсен çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Будапештра бомбăсем пăрахнипе пула 30 пушар ытла тухнă, вĕсенчен 5 пушарĕ питĕ вăйлă пулнă. Чугун çул çинчи сортировка станцийĕн районĕнче, бомбăсем тӳрех пырса тивнипе, икĕ боеприпас складĕ сирпĕнсе кайнă. Çавăн пекех тата çурçĕр енчи тавар станцийĕн районĕнче те вăйлă взрывсем пулнă.

Чоп чугун çул узелĕнче бомбăсем пăрахнипе пула 16 пушар тухнă. Чугун çул узелĕн хĕвеланăç тата хĕвелтухăç пайĕсенче вагонсемпе платформăсем çуннă. Пушарсенче темиçе вăйлă взрыв пулнă, вĕсенчен пĕр взрывĕ питĕ вăйлă пулнă.

СЕНТЯБРĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, ТАРТУ хулинчен çурçĕртерехри районран наступлени пуçласа ярса, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, тăватă кун хушши наступлени туса пырса, 70 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 120 километр таран сарнă. Çав наступлени вăхăтĕнче фронт çарĕсем халăх пурăнакан 1.500 пункта ытла ирĕке кăларнă, вăл шутра— КАЛЛАСТЕ, МУСТВЭ, ЙЫГЕВА, ВАРНЬЯ, КАСЕПЯ, КОСА, ВАРА, КЕСККЮЛЯ, ВЯЙКЕ-КОЛКЬЯ, АЛАТСКИВИ, НЫВА, МАГДАЛЭНА, КОГИ, ПАЛА, ТИХЭДА, ТУЛАВЭРЕ, ТОВЭРЕ, ПАЛАМУЗЭ, ТАММИСПЯ, АВИНУРМЭ, МЫЙЗАМА, МЭТСАКЮЛА, САЛЛА, ЭДРУ ятлă пысăк ялсем тата АВИНУРМЭ, МУСТВЭ ВЯГЕВА, ПЕДЬЯ, ЙЫГЕВА, СОЙДИ, КАЛЕВИ, КАРЭПЭРЕ, НАВА, ТАВИЕРЕ, КЯРКНА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах НАРВА хулинчен хĕвеланăçнерехре ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, тăшманпа çапăçса, виçĕ кун хушшинче 60 километр таран малалла кайнă, халăх пурăнакан 300 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ИЫХВИ, ТОЙЛА, ВАСАВЕРЕ, КУРЕМЯЭ-КЮЛЯ, ВАСКНАРВА, ЛИЙМОЛА, СОНДА, РАТВА, РИДАКЮЛА, ИСАКУ, ВЫГАНА, КАТААСЕ, КУРУ ятлă пысăк ялсем, СОНДА ятлă чугун çул узелĕ тата ВАЙВАРА, ИЫХВИ, СОМПА, КУКРУЗЕ, ПЮССИ, КОХТЛА, КИВИЫЛИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ВАЛГА хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ХОЛДРЕ, БРАНДЫ, КАУПЬИ, КОСЫНИ, ЗАТЮМУЙЖА, ДЗЕНИ ятлă пысăк ялсем.

РИГА хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — САВАС, ДРУВИЭНА, ТЫМЕРМАКИ, ЭРГЛИ ятлă пысăк ялсем тата ЛЫЗУМС, УРИЭКСТЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

КРОСНО хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ЛЮБАТУВКА, РЫМАНУВ, БЕСКО, СЕНЯВА, ОДЖЕХОВА, ПУЛАВЫ, ВИСЛОК-ВЕЛЬКИ, ЧИСТОГОРБ, ЯСЕЛЬ ятлă ялсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 48 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БУДАПЕШТ ХУЛИПЕ САТУ-МАРЕ ХУЛИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПĂННИ

Сентябрĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Венгри столицине Будапешт хулине тата Çурçĕр Трансильванири Сату-Маре чугун çул узелне йышлăн вĕçсе кайса тапăннă.

Будапешта тапăннă чухне хулари çар промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула, темиçе вунă тĕлте пушар тухнă. Вăл шутран 4 пушарĕ питĕ вăйлă пулнă. Газ заводĕ, резина фабрики тата хулан çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи вокзал районĕсенче те нумай тĕлте пушарсем тухнă. Пушарсенче темиçе вăйлă взрыв пулнă. Пушар çулăмне пирĕн летчиксем хуларан 200 километр ытла вĕçсе кайсан та курса пынă.

Сату-Маре чугун çул узелĕнче, бомбăсем тӳрех пырса тивнипе, боеприпассем тиенĕ виçĕ эшелон сирпĕнсе кайнă. Бомбăсем пăрахнипе пула тата боеприпассем сирпĕннипе пула, чугун çул узел территорийĕн чылай пысăк пайне вут хыпса илнĕ.

Финлянди правительствин делегацийĕ Мускавран тухса кайни

Финлянди правительствин Совет Союзĕпе Великобританин представителĕсемпе перемири тăвасси çинчен калаçса, çав перемири пирки тунă Килĕшĕве алă пуснă делегацийĕ сентябрĕн 20-мĕшĕнче Мускавран тухса кайнă. Çав делегацире çакăсем пулнă: Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ К. Энкель господин, çар министрĕ Р. Вальден генерал, Генеральнăй Штаб начальникĕ Э. Хейнрихс генерал тата О. Энкель генерал пулнă, вĕсемпе пĕрле экспертсемпе секретарьсем пулнă.

Мускав аэродромĕнче делегаци членĕсене çаксем ăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, СССР Наркоминделĕн 5-мĕш Европа отделĕн заведующийĕ П. Д. Орлов, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн заведующийĕн ĕçĕсене туса тăраканĕ Г. И. Фомин тата Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăну отделĕн начальникĕ генерал-майор В. Н. Евстигнеев тата Швецин Совет Союзĕнчи посланникĕ С. Седерблюм господин ăсатса янă.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешӳллĕ Королевстви пĕр енчен тата Финлянди тепĕр енчен пулса пĕр-пĕрипе перемири çинчен тунă КИЛĔШӲ

Германипе çыхăну тытма пăрахасси çинчен тата нимĕç çарĕсене Финляндирен кăларса ярасси çинчен Совет Правительстви малтанлăха лартнă условисене Финлянди Правительстви йышăннине кура тата перемири çинчен тунă Килĕшĕве мир çинчен тăвас договорăн хăшпĕр условийĕсене кĕртнипе малашне мир çинчен договор тăвас ĕç çăмăлланассине шута илсе, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви тата Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешӳллĕ Королевствинчи Унăн Величествин Правительстви, Финляндипе вăрçăллă лару-тăрура тăракан мĕнпур Пĕрлешнĕ Нацисен ячĕпе ĕçлекенскерсем, пĕр енчен, тата Финлянди Правительстви, тепĕр енчен, перемири тăвасси çинчен çак Килĕшĕве тума шутлаççĕ, çав Килĕшĕве пурнăçа кĕртесси Совет Главнокомандованийĕ, Финляндипе вăрçăллă лару-тăрура тăракан Пĕрлешнĕ Нацисен ячĕпе ĕçлекенскер, контрольлесе тăнипе пулса пымалла, малашне Совет Главнокомандованийĕ «Союзлă (Совет) Главнокомандовани» ята илсе çырăнса пырать.

Çӳлерехре çырса кăтартнă тăрăх, Союзлă (Совет) Главнокомандованин представителĕ генерал-полковник А. А. Жданов тата Финлянди Правительствин представителĕсем—Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ г-н Карл Энкель, Оборона Министрĕ инфантери генералĕ Рудольф Вальден, Генеральнăй Штаб Начальникĕ инфантери генералĕ Эрик Хейнрихс тата генерал-лейтенант Оскар Энкель, çав ĕçе тума тивĕçлĕ полномочи илнĕскерсем, аялтарахра кăтартнă çак условисене алă пуснă:

1. Финлянди вăрçă ĕçĕсене 1944 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче тата Совет Союзĕ 1944 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче чарса лартнă май, Финлянди хăйĕн çарĕсене Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче 1940 çулта тунă чикĕ леш енне, çак Килĕшӳ çумне Хушса çырнинче кăтартса панă йĕрке тăрăх, куçарса кайма пулать. (1-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

2. Финлянди Германин çĕр çинчи, тинĕс çинчи тата сывлăшри хĕçпăшаллă вăйĕсене, 1944 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕ хыççăн Финляндире тăрса юлнăскерсене, хĕçпăшалсăрлантарма тата вĕсен личнăй составне, тыткăна лекнĕ çар çыннисем вырăнне хурса, Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине пама пулать, çак ĕçре Финлянди çарне Совет Правительстви пулăшу парать.

Финлянди Правительстви çавăн пекех тата Германипе Венгрин Финлянди территорийĕнче пурăнакан граждăнĕсене те тытса чарма пулать. (2-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

3. Германин Эстонири çарĕсепе хирĕç тата нимĕçсен Балтика тинĕсĕн çурçĕр пайĕнчи тинĕс-çар флотне хирĕç сывлăшри вăрçă операцийĕсене туса пынă вăхăтра совет самолечĕсене вырнаçса тăма Финляндин кăнтăр тата кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕсенчи аэродромсене, вĕсен мĕнпур оборудованипе пĕрле, Финлянди, Союзлă (Совет) Главнокомандовани хушнă тăрăх, совет çарĕсен аллине пама пулать. (3-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

4. Çак Килĕшĕве алă пуснă кунран пуçласа икĕ уйăх çурă хушшинче Финлянди хăйĕн çарне мирлĕ лару-тăрăва куçарма пулать. (4-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

5. Германипе кирек мĕнле çыхăну та тытма пăрахнă Финлянди Германи сателличĕсем пулса тăракан государствăсемпе тытакан пур çыхăнусене те çавăн пекех татма пулать. (5-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

6. Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче 1940 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче Мускавра тунă Мирлĕ Договор, çак Килĕшӳрен тухса тăракан улшăнусемпе, ĕçе кĕрет.

7. Совет Государстви 1920 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче тунă тата 1940 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче тунă Мирлĕ Договорсем тăрăх хăй ирĕкĕпе Финляндие панă Петсамо (Печенега) облаçне, çак килĕшӳ çумне Хушса çырнинче çырса кăтарнă тата карттăра кăтартса панă чикĕсем тăрăх, Финлянди Совет Союзне тавăрса парать. (7-мĕш статья çумне Хушса çырнине тата 1:500.000 масштаблă карттăна пăхăр).

8. Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче 1940 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче тунă Мирлĕ Договор тăрăх Ханко çурутравне тара илме май панă хăйĕн прависене Совет Союзĕ пăрахăçлать, Финлянди вара хăй енчен Совет Союзне, тара илмелли правăсем тăрăх, Совет Союзĕн тинĕс-çар базине тума Порккала—Удд районĕнчи территорие тата шыв талккишне пама пулать.

Порккала—Удд районĕнчи базăн территорийĕпе талккишĕн чиккисене çак статья çумне Хушса çырнинче палăртнă тата карттă çинче кăтартса панă. (8-мĕш статья çумне хушса çырнине тата 1:100.000 масштаблă карттăна пăхăр).

9. Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче 1940 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче Алланд утравĕсем çинчен тунă Килĕшӳ пĕтĕмĕшпех ĕçе кĕмелле пулать.

10. Финлянди советăн тата союзниксен тыткăна лекнĕ çар çыннисене, çавăн пекех тата Финляндире тытса чарнă тата Финляндие ирĕксĕрлесе илсе кайнă совет граждăнĕсемпе союзниксен граждăнĕсене, хăйсен тăван çĕршывĕсене тавăрас шутпа, халех Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине пама пулать.

Çак условисене алă пуснă вăхăтран тытăнса малашне çав граждăнсене хăйсен çĕршывĕсене тавăриччен, советăн тата союзниксен тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсене, çавăн пекех тата ирĕксĕрлесе кайнă тата тытса чарнă граждăнсене Финлянди хăйĕн шутĕнчен кирлĕ чухлĕ апат-çимĕçсем, тумтирсем, санитари ыйтнă пек тивĕçлĕ медицина пулăшăвĕ, çавăн пекех вĕсене хăйсен тăван çĕршывĕсене тавăрнма транспорт хатĕрĕсем тупса пама пулать.

Çакăнпа пĕрлех финсен тыткăна лекнĕ çар çыннийĕсемпе тытса чарнă çыннийĕсене те, союзлă государствăсен территорийĕсем çинче тăраканскерсене, Финляндие тавăрса параççĕ.

11. Вăрçă ĕçĕсемпе тата Финлянди совет территорине оккупациленипе Совет Союзне кӳнĕ тăкаксене Финлянди Совет Союзне 300 миллион доллар чухлĕ, ултă çул хушши таварсем (йывăç материалĕсем, хут, целлюлоза, тинĕс çинче тата юхан шывсем çинче çӳрекен суднăсем, тĕрлĕ йышши машина оборудованийĕсем) парса тăрса, тӳлесе татма пулать.

Финлянди ытти союзлă государствăсен харпăрлăхне тата çав государствăсен Финляндире пурăннă граждăнĕсене вăрçă вăхăтĕнче кӳнĕ тăкаксене тӳлесе татассине те палăртса хураççĕ, мĕн чухлĕ тӳлессине уйрăмăн палăртмалла пулать. (11-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

12. Финлянди хăйĕн территорийĕ çинче мĕнпур Пĕрлешнĕ Нацисен тата вĕсен граждăнĕсен пĕтĕм законлă прависемпе интересĕсене, вĕсем вăрçăччен мĕнле пулнă çаплипех, юсаса йĕркене кĕртме, çавăн пекех тата вĕсен пурлăхĕсене те пĕтĕмĕшпех юсавлăн каялла тавăрса пама пулать.

13. Вăрçăра тунă преступленисемшĕн айăплă çынсене тытса чарас тата вĕсене суд тăвас ĕçре Финлянди Союзлă державăсемпе пĕрле ĕçлеме пулать.

14. Совет Союзĕн территорийĕ çинчен вăрçă вăхăтĕнче илсе тухса кайнă мĕнпур хаклă япаласемпе материалсене, государство, общество тата коопераци организацийĕсен, предприятисемпе учрежденисен е уйрăм граждăнсен мĕнпур хаклă япалисемпе материалĕсене, уйрăмăн илсен: фабрикăсемпе заводсен оборудованийĕсене, паровозсене, чугун çул вагонĕсене, суднăсене, тракторсемпе автомашинăсене, историллĕ памятниксене, музейсенчи хаклă япаласене тата ытти тĕрлĕ пурлăхсене Финлянди Союзлă (Совет) Главнокомандовани кăтартнă сроксенче Совет Союзне пĕтĕмĕшпех юсавлăн тавăрса пама пулать.

15. Германипе унăн сателлчĕсен Финлянди территорийĕ çинчи мĕнпур çар пурлăхĕсене, çав шутра Германипе унăн сателличĕсен Финлянди шывĕсем çинче тăракан суднисене те, вĕсене трофейсем вырăнне хурса, Финлянди Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине пама пулать.

16. Германипе Венгрин е вĕсен граждăнĕсемпе çыннисен, Финлянди территорийĕ çинче е вĕсем хăйсем йышăннă территорисем çинче пурăнаканскерсен, кирек мĕнле пурлăхĕсене те (вăл шутра хаклă йышши япаласемпе валютăна та), Союзлă (Совет) Главнокомандовани ирĕк памасăр, Финлянди хăйĕн территорийĕ çинчен илсе тухса каймалла мар тума е çав япаласене турта-турта илмелле мар тума пулать.

17. Финсен суту-илӳ суднисене, халиччен союзниксем контроллесе тăма тытăннă суднăсемсĕр пуçне, вĕсемпе союзниксен пĕрлехи интересĕсемшĕн усă курас шутпа, Союзлă (Совет) Главнокомандовани контроллесе тăмалла пулать.

18. Пĕрлешнĕ Нацисен суднисене, халĕ Финлянди порчĕсенче тăраканскерсене, çав суднăсем камăн аллинче шутланса тăнине пăхмасăр, пурне те, вĕсемпе союзниксен пĕрлĕхлĕ интересĕсемшĕн Германие хирĕç вăрçнă вăхăтра усă курма, Финлянди Союзлă (Совет) Главнокомандовани аллине пама пулать, кайран çав суднăсене хăйсен хуçисене тавăрса параççĕ.

19. Вăрçăпа сыхăннă тĕллевсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте Пĕрлешнĕ Нацисем ыйтма пултаракан материалсемпе продукцие Финлянди пурне те парса тăрать.

20. Пĕрлешнĕ Нацисене усă кӳрес тесе ĕçленĕшĕн е вĕсем Пĕрлешнĕ Нацисен ĕçне кăмăлланăшăн е тата вĕсем мĕнле нацирен тухнине кура хупса лартнă мĕнпур çынсене, вĕсем мĕнле çĕршывăн граждăнĕсем тата мĕнле нацирен тухнă çынсем пулнине пăхса тăмасăр, Финлянди халех ирĕке кăларма пулать, çавăн пекех тата тĕрлĕрен нацисене хĕсĕрлекен кирек мĕнле законсене те тата çав законсенчен тухса тăракан хĕсĕрлемелли кирек мĕнле майсене те пăрахăça кăларать.

21. Финлянди хăйĕн территорийĕ çинчи мĕнпур гитлерла (фашистла) организацисене — политика тата çар организацийĕсене, çар майлă туса йĕркеленĕ организацисене, çавăн пекех ытти оганизацисене те, Пĕрлешнĕ Нацисене хирĕç, уйрăмах Совет Союзне хирĕç тăшманла пропаганда сараканскерсене, салатса яма, малашне вара çавăн йышши организацисем пачах та пулмалла мар туса хума сăмах парать.

22. Финляндипе мир тăвиччен çак условисене мĕнле пурнăçласа пынине йĕркелесе тата контроллесе тăма Союзниксен Контроль Комиссине тăваççĕ, ăна Союзлă Державăсен ячĕпе ĕçлекен Союзлă (Совет) Главнокомандовани пĕтĕмĕшлĕн ертсе, кăтартусем парса пырать. (22-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

23. Çак Килĕшӳ ăна алă пуснă самантран пуçласа законлă пулса тăрать.

Килĕшĕве Мускавра, 1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче вырăс, акăлчан тата фин чĕлхисемпе пĕр экземпляр çырнă, ăна сыхласа усрама ССР Союзĕн Правительствине параççĕ, çавăнпа пĕрлех вырăс тата акăлчан чĕлхисемпе çырнă текстсем чăн-чăн тĕрĕс текстсем пулса тăраççĕ.

Çак Килĕшĕвĕн ĕнентермелле туса çирĕплетнĕ копийĕсене Хушса çырнисемпе тата карттăсемпе пĕрле ССР Союзĕн Правительстви çак Килĕшĕве алă пуснă кашни ытти Правительствăна парать.

ССР Союзĕпе Пĕрлешӳллĕ
Королевствăн Правительствисем
полномочи панипе
А. ЖДАНОВ.

Финлянди Правительстви
полномочи панипе
К. ЭНКЕЛЬ
Р. ВАЛЬДЕН
Э. ХЕЙНРИХС
О. ЭНКЕЛЬ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешӳллĕ Королевстви пĕр енчен тата Финлянди тепĕр енчен пулса пĕр-пĕрипе перемири тăвасси çинчен 1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче тунă Килĕшӳ çумне ХУШСА ÇЫРНИСЕМ

а. 1-мĕш статья çумне хушса çырни

Финлянди çарĕсене Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи 1940 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче тунă Мирлĕ Договор тăрăх палăртнă государство чикки леш енне, 1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче алă пуснă Килĕшӳрен тухса тăракан улшăнусене шута илсе, куçарса каясси финсен çарĕсем йышăнса тăракан пур участоксенче те çакăн пек йĕркепе пулса пымалла:

1. Перемири çинчен тунă Килĕшĕве алă пуснă хыççăнхи пĕрремĕш кунĕнче финсен çарĕсене, Хĕрлĕ Çарăн малти чăçĕсемпе финсен çарĕсем тăракан хушă пĕр километртан кая мар пулмалла туса, каялла чакармалла.

2. Çав самантран пуçласах 48 сехет (2 талăк) хушшинче финсен çарĕсем хăйсен минăсем лартса тухнă, йĕплĕ пралук карса тухнă тата ытти чăрмавсем туса тухнă вырăнсенче 30 метртан ансăр мар çулсем уçса хураççĕ, çав çулсене батальонлă колоннăсемпе вĕсен обозĕсем ирĕклĕн куçса пымалла туса уçас пулать, çавăн пекех минăсем ларса юлнă ытти вырăнсене финсен çарĕсем лайăх курăнса тăракан паллăсем лартса пӳлсе тухаççĕ.

Çӳлерехре кăтартнă чăрмавсем урлă çулсем уçассине тата минăсем юлнă вырăнсене палăртса пӳлессине финсен çарĕсем чакакан мĕнпур территори талккишĕнче туса ирттермелле.

Çулсем уçса тасатассине финсен çарĕсем километрлă нейтральнăй зонăра та, çавăн пекех чăрмавсем тунă пĕтĕм вырăнсенче те çарсем куçма май пур çулсемпе сукмаксем çинче талккишĕпех туса ирттерĕççĕ.

Иккĕмĕш талăк вĕçленнĕ тĕле мĕнпур тĕрлĕ чăрмавсен тĕрĕс схемисене, çав схемăсенче финсен çарĕсем уçнă çулсене тата уçма тивĕçлĕ çулсене, çавăн пекех минăсем юлнă мĕнпур вырăнсене палăртса пӳлнине те кăтартса парса, Финлянди çарĕсен командованийĕ Хĕрлĕ Çар чăçĕсен тивĕçлĕ командованийĕн аллине парать.

3. Тип çĕр çинче, юханшывсемпе кӳлĕсем çинче, çавăн пекех тата Балтикăпа Баренц тинĕсĕсем çинче хăварнă минăсем тата ытти тĕрлĕ чăрмавсем çинчен калакан мĕнпур схемăсемпе формулярсене, отчет тăратакан карточкăсене, кунсăр пуçне çав шывсем тăрăх çӳреме сĕнекен çулйĕрсем, фарматерсем тата правилăсем çинчен калакан даннăйсене те финсен командованийĕ 5 кунлăх срокра Хĕрлĕ Çарпа

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Великобританипе Çурçĕр Ирландин Пĕрлешӳллĕ Королевстви пĕр енчен тата Финлянди тепĕр енчен пулса пĕр-пĕринпе перемири тăвасси çинчен 1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче тунă Килĕшӳ çумне

ХУШСА ÇЫРНИСЕМ

(Юлашки)

Тинĕс-Çар Флочĕн командованийĕ аллине парать.

4. Финсен чаçĕсем вырнаçса тăракан линирен пуçласа государство чикки патне çитичченхи мĕнпур территори çинчен минăсене, йĕплĕ пралук картисене тата ытти тĕрлĕ чăрмавсене пĕтĕмĕшпех тасатассине, çавăн пекех тата совет территорийĕсем патне пымалли вырăнсенчи фарватерсене чăрмавсенчен тасатассине те Финлянди çарĕсен тата финсен тинĕс-çар флочĕн вăйĕпе май килнĕ таран хăвăртрах, анчах перемири çинчен тунă килĕшĕве алă пуснă самант хыççăн 40 кунтан кая юлмасăр туса ирттермелле.

5. Финсен çарĕсене государство чиккилеш енне куçарасси тата ун патнелле Хĕрлĕ Çар чаçĕсем куçса пырасси 1944 çулхи сентябрĕн 21-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре пĕтĕм фронт линийĕ тăрăх пĕр вăхăтрах пуçланать.

Финсен çарĕсем талăкра 15 километртан кая мар чакса пымалла, çакăнпа пĕрлех Хĕрлĕ Çар чаçĕсем малалла куçасси çакăн пек хисеппе пулса пымалла: финсен тылра пыракан чаçĕсемпе Хĕрлĕ Çарăн малта пыракан чаçĕсем хушшинчи çĕр таллкишĕ 15 километр таран пулмалла.

6. Финсен çарĕсене государство чиккилеш енне куçарса каймалли сроксене, çӳлерехре кăтартнă 5-мĕш пункт тăрăх, çакăн пек тунă:

Вуокинсальма, Риахимяки участокĕнче—октябрĕн 1-мĕшĕнче,

Риахимяки, Койта-Йоки шывĕ участокĕнче — октябрĕн 3-мĕшĕнче,

Който-Йоки шывĕ, Корписелькя участокĕнче — сентябрĕн 24-мĕшĕнче,

Корписелькя, Пюхя-Ярви кӳлли участокĕнче—сентябрĕн 28-мĕшĕнче,

Пюхя-Ярви, Койтсанлахти участокĕнче —сентябрĕн 26-мĕшĕнче,

Койтсанлахти, Энсо станцийĕ участокĕнче — сентябрĕн 28-мĕшĕнче,

Энсо станцийĕ, Виролахти участокĕнче—сентябрĕн 24-мĕшĕнче.

Каялла чакакан финсен çарĕсем хăйсемпе пĕрле боеприпассемпе продовольстви, фуражпа горючи тата сĕрмелли материалсен çĕклеме е лавпа тиеме май пур запасĕсене кăна илеççĕ. Ытти мĕнпур запассем вырăнтах юлаççĕ те Хĕрлĕ Çар командованийĕн аллине куçаççĕ.

7. Совет Союзне тавăрса паракан тата ун аллине куçакан территорисем çинчи халăх пурăнакан мĕнпур пунктсене, çулйĕрсене, çарпа хуçалăх сооруженийĕсене, кăл шутра кĕперсемпе пĕвесене, аэродромсене, казармăсене, складсене, чугун çул узелĕсене, станцисенчи çурт-йĕрсене, промышленность предприятийĕсене, гидротехника сооруженийĕсене, портсемпе пристаньсене, телеграфпа телефона, электростанцисене, çыхăнупа электричество линийĕсене финсен çар командованийĕ пĕтĕмĕшпех сыхлавлăн та юсавлăн парса хăварма тивĕçлĕ.

Çӳлерехре кăтартса панă парса хăварма тивĕçлĕ мĕнпур объектсене, финсен çар командованийĕ хушнă тăрăх, минăсенчен пурне те вăхăтра тасатмалла.

8. Финлянди правительстви финсен çарĕсене государство чикки урлă куçарса кайнă чухне финсен çарĕсем куçса каякан территорисем çинчи халăха тата халăх пурăнакан ялсемпе çуртйĕрсене тивмелле мар тума, çавăн пекех çав халăхăн мĕнпур пурлăхне, обществăпа кооперации, культурăпа йăла пурлăхĕсемпе ытти тĕрлĕ пурлăхсене тивмелле мар тума сăмах парать.

9. Хушса çырнин 7-мĕш пунктĕнче кăтартнă объектсене Финлянди енĕ совет енне панă чухне тухса тăма пултаракан мĕнпур ыйтусене икĕ енчен те уйăрнă представительсем вырăнтах татса параççĕ, çавăнпа та икĕ çарĕ те куçса пыракан кашни çул çине çар командованийĕсем çарсем куçнă вăхăтра ĕçлеме ятарласа уполномоченнăйсем уйăраççĕ.

10. Нимĕç çарĕсем йышăнса тăракан участоксем çинче совет çарĕсем государство чикки патнĕ совет çарĕсен командованийĕ хушнă тăрăх куçаççĕ.

б. 2-мĕш статья çумне хушса çырни

1. Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем çинчен тата Германин çар командованийĕн ССР Союзне тата Пĕрлешнĕ ытти Нацисене хирĕç вăрçă ĕçĕсем туса пымалли планĕсем çинчен калакан сведенисене, çавăн пекех тата нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсен вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе тунă схемисемпе карттисене тата мĕнпур оперативнăй докуменчĕсене, хăйĕн аллинче пуррисене, Финляндин çар командованийĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованийĕ кăтартнă срокра пĕтĕмĕшпех союзлă (Совет) Главнокомандовани аллине парать.

2. Финлянди Правительстви хăйĕн тивĕçлĕ органĕсене метеорологи тĕлĕшпе Союзлă (Совет) Главнокомандованине тăтăмах информацисем парса тăма хушмалла.

с. 3-мĕш статья çумне хушса çырни

1. Килĕшĕвĕн 3-мĕш статьи тăрăх, Союзлă (Совет) Главнокомандовани финсен çар командованине Союзлă (Совет) Главнокомандованийĕ аллине мĕнле аэродромсем пама кирлине, çав аэродромсем çинче мĕнле оборудовани юлма тивĕçлине, çавăн пекех тата çав аэродромсемпе усă курмалли йĕркене мĕнле тумаллине кăтартса парать.

Финлянди Правительстви Совет Союзне чугун çулсемпе, шыв çулĕсемпе, шоссе тата сывлăш çулĕсемпе, Совет Союзĕнчен çӳлерехре кăтартнă аэродромсем вырнаçса тăракан районсене çынсемпе груэсем турттарма кирлĕскерсемпе, усă курма май туса парать.

2. Германие хирĕç пыракан вăрçă пĕтиччен союзниксен çар карапĕсемпе суту-илӳ суднисен Финлянди шывĕсемпе, порчĕсемпе, пристанĕсемпе усă курмалли право пулать. Финлянди правительстви вĕсене материалсемпе техника тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ пулăшу парса тăрать.

д. 4-мĕш статья çумне хушса çырни

1. Килĕшĕвĕн 4-мĕш статьи тăрăх, финсен çар командованийĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованине Финляндин мĕнпур тип çĕр çинчи, тинĕс çинчи тата сывлăшри вейĕсен составĕ çинчен, вĕсене мĕнле хĕçпăшаллантарни çинчен тата вĕсем мĕнле вырнаçса тăни çинчен тулли информаци парать, çавăн пекех тата финсен çарне Килĕшӳре кăтартнă срокра мирлĕ лару-тăрăва куçармалли йĕрке çинчен Союзлă (Совет) Главнокомандованийĕпе калаçса татăлать.

2. Германипе вăрçă пынă тапхăрта финсен мĕнпур çар карапĕсене, суту-илӳ суднисене тата самолечĕсене хăйсен базисемпе порчĕсене тата аэродромĕсене тавăрмалла, малашне вара вĕсен çав базăсенчен Союзлă (Совет) Главнокомандованинчен тивĕçлипе ирĕк илмесĕр ниçта та тухмалла мар.

е. 5-мĕш статья çумне хушса çырни

1. Килĕшĕвĕн 5-мĕш статьинче Финлянди Германипе тата унăн сателличĕсемпе кирек мĕнле çыхăнусем те тытма пăрахасси çинчен каланă чухне çакна шута илнĕ: Финлянди Германипе тата Венгрипе тытса тăнă мĕнпур дипломатипе консул çыхăнăвĕсене тата ытти тĕрлĕ çыхăнусене, çавăн пекех почтăпа телеграф, телефон çыхăнăвĕсене пĕтĕмпех татмалла.

2. Финляндирен нимĕç çарĕсене пĕтĕмĕшпех тасатса çитериччен Финлянди Правительстви Финляндире вырнаçса тăракан дипломатиллĕ миссисемпе консульствăсем ют çĕршывсемпе почта урлă дипломатиллĕ çыхăну тытса тăрассине, çавăн пекех тата радиопа, телеграфпа çыхăнса тăрассине, телеграф тăрăх шифрсемпе çырусем çӳрессине, ют çĕршывсемпе телефонпа çыхăнса тăрассине чарса лартма сăмах парать.

ф. 7-мĕш статья çумне хушса çырни

Финлянди Совет Союзне Петсамо (Печенега) облаçне тавăрса панă май Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Финлянди хушшинчи государство чиккин линийĕ çакăн пек пулмалла:

Яури-Ярви кӳлли çывăхĕнчи 859(90) номерлĕ чикĕ юпи (Корватунтури) патĕнчен государство чиккин линийĕ çурçĕр-хĕвеланăç еннелле Российăпа Финляндин ĕлĕкхи чикки пулнă йĕр тăрăх, 91-мĕш, 92-мĕш тата 93-мĕш номерлĕ чикĕ юписем урлă 94-мĕш номерлĕ чикĕ юпи патнелле пырса, ĕлĕк Российăпа Норвеги тата Финлянди чиккисем пĕрлешнĕ çĕре тухать.

Малалла чикĕ линийĕ çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле пырса, Российăпа Норвеги хушшинчи государство чикки пулнă йĕр çине тухать те Варангер фиорчĕ патне çитет. (1:500000 масштаблă вырăс карттине пăхăр).

859(90)-мĕш номерлĕ чикĕ юпинчен (Корватунтурирен) пуçласа 94-мĕш номерлĕ чикĕ юпи патне çитиччен тăсăлса выртакан чикĕ линине Совет Союзĕпе Финляндин Пĕрле ĕçлемелле тунă Комиссийĕ вырăна тухса палăртать.

Çав Комисси чикĕ линийĕ çинчи паллăсене лартса тухать, çав линине тĕплĕн çырса кăтартать тата 1:25000 масштаблă карттă çине палăртса хурать.

Комисси хăйĕн ĕçне Советăн Çар Командованийĕ кăтартса панă срокра тытăнать.

Çӳлерехре асăннă Комисси çырса кăтартнă чикĕ линине тата çав линие палăртнă карттăна икĕ Правительстви те çирĕплетме тивĕçлĕ.

г. 8-мĕш статья çумне хушса çырни

1. ССР Союзĕ Финляндирен тара илекен Порккала-Удд районĕн чиккине палăртакан пуçламĕш пункт çак координатсем каçакан точка пулса тăрать: çурçĕрти широта—59 градус та 50 минута, хĕвелтухăçĕнчи долгота—24 градус та 07 минута. Çак точкăран пуçласа чикĕ линийĕ çурçĕрелле 24 градус та 07 минутăллă меридиан тăрăх çакăн пек координатсем каçакан точка патнелле пырать: çурçĕрти широта—60 градус та 06 минута, хĕвелтухăçĕнчи долгота—24 градус та 07 минута. Малалла чикĕ линийĕ малтанлăха палăртнă кукăр лини тăрăх çурçĕр еннелле çак координатсем каçакан точка патнелле пырать: çурçĕрти широта—60 градус та 08 минута, хĕвелтухăçĕнчи 6-мĕш долгота—24 градус та 07 минута.

Куитан чикĕ линийĕ малтанлăха палăртнă кукăр лини тăрăх çурçĕр-хĕвелтухăç тата хĕвелтухăç еннелле çак координатсем каçакан точка патнелле пырать: çурçĕрти 4-мĕш широта—60 градус та 10 минута; хĕвелтухăçĕнчи 1-мĕш долгота—24 градус та 34 минута. Малалла чикĕ линийĕ малтанлăха палăртнă кукăр линипе Эспон-Лахти заливĕ тăрăх, унтан вара Смухольмарне, Бьеркен, Медвасте, Хег-Хольм тата Стур-Хами-Хольм утравĕсенчен хĕвелтухăçнерехре иртсе çак координатсем каçакан точка патне пырать: çурçĕрти 9-мĕш широта—60 градус та 02 минута; хĕвелтухăçĕнчи 7-мĕш долгота—24 градус та 37 минута, малалла вара чикĕ линийĕ кăнтăралла 24 градус та 37 минутăллă меридиан тăрăх Финляндин территориллĕ шывĕсен тулашĕ патне çитиччен пырать (çак Килĕшӳпе пĕрле панă 1:00000 масштаблă карттă çине пăхăр).

Совет Союзĕ тара илекен Порккала-Удд районĕн чиккисене Совет Союзĕпе Финляндин Пĕрле ĕçлемелле тунă Комиссийĕ вырăна тухса палăртать. Çав Комисси чикĕ çинчи паллăсене лартса тухать, çав линие тĕплĕн çырса кăтартать тата ăна 1:20000 масштаблă топографи картти çине тата 1:50000 масштаблă тинĕс картти çине палăртса хурать.

Комисси хăйĕн ĕçне Совет Союзĕн Тинĕс-Çар Командованийĕ кăтартса панă срокра тытăнать.

Çӳлерехре асăннă Комисси çырса панă тара илнĕ районăн чиккине тата çав линие палăртнă карттăна икĕ Правительстви те çирĕплетме тивĕçлĕ.

2. Килĕшĕвĕн 8-мĕш статьи тăрăх, Порккала-Удд районĕнчи территорипе шыв таллкишне Финляндин Совет Союзĕ аллине перемири çинчен тунă Килĕшĕве алă пуснă самантран пуçласа 10 кун хушшинче памалла; Совет Союзĕ çав районра тинĕс-çар базине организацилет; Порккала-Удд районне Финлянди Совет Союзне тара памалли йĕркепе усă курма 50 çуллăха парать, Совет Союзĕ çавăншăн çулсерен, Финлянди маркипе шутласа, 5 миллион марка тӳлесе тăрать.

3. Совет Союзĕнчен Порккала-Удд районĕнчи тинĕс-çар базине ăсатакан çынсемпе грузсене турттарма кирлĕ чугун çулсемпе, шыв çулĕсемпе, шоссе тата сывлăш çулĕсемпе усă курма Финлянди правительстви Совет Союзне пур майсене те туса парать.

Финлянди Правительстви Совет Союзне ССР Союзĕпе хăй тара илекен Порккала-Удд районĕ хушшинче çыхăну тытса тăма çыхăнăвăн пур майĕсемпе те пĕр чăрмавсăр усă курма ирĕк парать.

х. 11-мĕш статья çумне хушса çырни

Килĕшĕвĕн 11-мĕш статьи тăрăх Финлянди Совет Союзне парса тăма тивĕçлĕ таварсен ячĕсемпе вĕсен тĕслĕхĕсене, çавăн пекех тата çав таварсене çулсерен парса тăмалли тĕрĕс сроксене икĕ Правительство хушшинче тунă уйрăм килĕшӳ тăрăх палăртаççĕ.

Çак Килĕшĕвĕн 11-мĕш статьи тăрăх вăрçă тăкакĕсене Америка долларĕпе шутласа тӳлемелле тунă; Америка долларĕ çак Килĕшĕве алă пуснă кун тĕлне ылттăнпа шутласан мĕн хак тăнине, урăхла каласан, ылттăнăн пĕр унцийĕ 35 доллар тăнине шута илнĕ.

и. 22-мĕш статья çумне хушса çырни

1. Союзниксен Контроль Комиссийĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованин органĕ пулса тăрать, вăл ăна тӳрремĕнех пăхăнса тăрать.

Контроль Комиссийĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованипе Финлянди Правительстви хушшинчи çыхăнусене пурнăçа кĕртсе пыракан звено пулса тăрать, çав правительство урлă Комисси Финлянди влаçĕсемпе мĕнпур ĕçсене туса пырать.

2. Контроль Комиссийĕн тĕп задачи — перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 10-мĕш, 12-мĕш, 13-мĕш, 14-мĕш, 15-мĕш, 16-мĕш, 17-мĕш, 18-мĕш, 20-мĕш тата 21-мĕш статьисене Финлянди правительстви мĕн чухлĕ вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынине сăнаса тăрасси пулать.

3. Контроль Комиссийĕн Финлянди влаçĕсенчен çӳлерехре кăтартнă задачăна пурнăçа кĕртсе пыма кирлĕ мĕнпур информацисене илсе тăма право пулать.

4. Перемири çинчен тунă Килĕшĕвĕн çӳлерехре кăтартса панă статьисене мĕнле те пулин пăсни палăрсан, Контроль Комиссийĕ çавăн пирки кирлĕ мерăсем йышăнма Финлянди влаçĕсене тивĕçлĕ кăтартусем парать.

5. Контроль Комиссийĕ ятарласа хăйĕн органĕсемпе секцийĕсене тума пултарать, вĕсене вара тивĕçлĕ задачăсене пурнăçа кĕртме кăтартусем парать.

Кунсăр пуçне, Контроль Комиссийĕ хăйĕн уполномоченнăйĕсем урлă кирлĕ чухне тĕрĕслӳсем туса ирттерме тата хăйне кирлĕ информацисем пухма пултарать.

6. Контроль Комиссийĕ Хельсинки хулинче вырнаçса тăмалла пулать.

7. Контроль Комиссин членĕсем, çавăн пекех унăн уполномоченнăйĕсем те кирек мĕнле учрежденисене те, кирек мĕнле предприятисемпе портсене те пĕр чăрмавсăр пырса кĕме тата хăйсен ĕçĕнче кирлĕ пулакан пур информацисене те илме пултараççĕ.

8. Контроль Комиссийĕн мĕнпур дипломатиллĕ привилегисемпе усă курма право пур, ку шута Комисси членĕсене, вĕсен харпăрлăхне тата архивĕсене никам та тĕкĕнме юраманни те кĕрет, Контроль Комиссийĕн шифрпа тата дипкурьерсемпе усă курса çыхăну тытма право пулать.

9. Контроль Комиссийĕн хăйĕн аллинче темиçе самолет пулать, вĕсемпе усă курма Финлянди влаçĕсем кирлĕ условисене пурне те туса параççĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Улатăр хулинчи предприятисенчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерсемпе техниксене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата питĕ тухăçлăн ĕçленĕшĕн Улатăр хулинчи предприятисенчи уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерсемпе техниксене тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Геннадий Соломонович Абрашкова — цех мастерне.
2. Михаил Васильевич Андреева—главнăй инженера.
3. Иван Федорович Баранова—электромонтера.
4. Борис Семенович Богомолова—предприяти начальникне.
5. Леонид Яковлевич Большакова—техникăлла контроль отделĕн контролерне.
6. Василий Андреевич Гаврика — предприяти начальникĕн снабжени енĕпе ĕçлекен помощникне.
7. Сергей Дмитриевич Гарева—цех мастерне.
8. Капитолина Васильевна Григорьевăна — станочницăна.
9. Пантелеймон Пантелеймонович Есипчука—техника отделĕн инженер-конструкторне.
10. Василий Иванович Зайцева — слесарь-сборщика.
11. Алексей Иванович Иванова—слесаре.
12. Ольга Васильевна Ивановăна—техникăлла контроль отделĕн контролерне.
13. Павел Ильич Иванова—слесаре.
14. Исаак Семенович Капеляна—цех начальникне.
15. Василий Николаевич Козляковские—предприяти начальникĕн заместительне.
16. Иван Федорович Королева—цех мастерне.
17. Василий Никифорович Кузнецова — цех мастерне.
18. Георгий Иванович Куликова—техник-конструктора.
19. Илья Петрович Лебедева — старши табельщика.
20. Нил Иванович Лебедева — цех начальникне.
21. Василий Алексеевич Лисичкина — слесаре.
22. Василий Алексеевич Малышева — цех мастерне.
23. Дмитрий Павлович Мальчикова — тимĕрçе.
24. Андрей Михайлович Михайлова—конюха.
25. Иван Михайлович Моспанченкăна — слесарь-сборщика.
26. Борис Афанасьевич Орлова — цех мастерне.
27. Дмитрий Сергеевич Орлова—техникăлла контроль отделĕн мастерне.
28. Иван Павлович Павлова—грузчика.
29. Семен Алексеевич Переяслова—цех начальникне.
30. Валентина Петровна Поповăна—комсорга.
31. Федор Петрович Приходькăпа—рабочие.
32. Андрей Иванович Родионова—тимĕрçе.
33. Аркадий Алексеевич Румянцева — инженер-технолога.
34. Николай Иванович Сабакеева.
35. Алексей Петрович Савинова—фрезеровщика.
36. Николай Сергеевич Светлова—токаре.
37. Кузьма Семенович Семагина—кочегара.
38. Сергей Семенович Семенова—рабочие.
39. Василий Михайлович Сергеева—чернорабочие.
40. Иосиф Васильевич Смирнова—столяра.
41. Михаил Иванович Смирнова — слесарь-сборщика.
42. Иван Петрович Сорокина—цех механикне.
43. Александра Васильевна Степановăна — ВКП(б) Улатăр горкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.
44. Евдокия Алексеевна Струковăна — термиста.
45. Петр Максимович Струнина—тимĕрçе.
46. Ангелина Михайловна Суриковăна—столяр-станочницăна.
47. Таисия Федоровна Таковăна—станочницăна.
48. Василий Григорьевич Тюряхина — слесаре.
49. Константин Михайлович Чистякова —техникăлла контроль отделĕн мастерне.
50. Григорий Федорович Шелушенкăна—слесаре.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕ.

Авăн çапса пĕтеретпĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз, кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес тесе, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Колхоз тĕш тырă кĕлтисене тата пăрçапа ясмăка капана хывса çитернĕ. Халĕ колхозра кĕрхи çĕртме тăвас, авăн çапас ĕçсем хĕрӳллĕн пыраççĕ. Паянхи кун тĕлне колхоз 20 гектар ытла кĕрхи çĕртме тунă. И. Антоновпа А. Николаев колхозниксем кашни кунах пĕрер гектар вырăнне 1,25 гектар сухалаççĕ. Авăн çапнă çĕрте 22 колхозник ĕçлет. Вĕсем 6 лаша вăйлĕ молотилкăпа кунне 6,5 гектар çинчи тырра çапса пуçтараççĕ. Çапнă тырра çийĕнчех тасатса, тĕплĕн виçсе амбара кĕртеççĕ. Итем çинче весовщикпа пĕрле бригадир тата кладовщик çак ĕçе сăнасах тăраççĕ.

Пирĕн колхоз сентябрьте авăн çапса пĕтерет. Халĕ çурри ытла çапнă ĕнтĕ. Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра эпир государствăна тырă парса татрăмăр, халĕ çитес çулшăн аванс шучĕпе паратпăр. Кĕлте турттарса капана хывнă вăхăтра В. Григорьевăпа С. Герасимова колхозницăсем арçынсенчен те лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем кунсерен 55—60-шер лав кĕлте капана хывса пычĕç. Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра сдельщинăпа ĕçлени колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелли закона тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма пулăшрĕ. Çапла вара кунта 18 колхозницăна ĕçшĕн хушса тӳленĕ.

Халĕ, аслă Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă май, колхозри ĕçсем татах хăвăртланчĕç.

П. ВАРЛАМОВ,
Колхоз бригадирĕ.

Çĕрпӳ районĕ кок-сагыз туса илмелли плана тултарчĕ

ÇЕРПУ, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем кăçал кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлерĕç. Район кок-сагыз туса илмелли плана ăнăçлăн пурнăçларĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхозри кок-сагыз тĕлĕшпе ĕçлекен звено (звеновочĕ Григорьева) 2,85 гектартан кок-сагыз тымарне 30 центнер, вăрлăхне 58 килограмм пухса илнĕ. Кок-сагыз патĕнче ĕçлекен колхозниксем лайăх ĕçленĕшĕн 10 мăшăр резина калуш, колхоз 18.000 тенкĕлĕх, колхоз председателĕ 720 тенкĕлĕх промышленность таварĕсем илеççĕ.

Кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе «Малалла» колхоз та аван ĕçленĕ. 4 гектартан кок-сагыз тымарне 35 центнер, вăрлăхне 40 килограмм пухса илнĕ. Колхоз çак çитĕнӳсемшĕн 17.000 тенкĕлĕх промышленность таварĕсем илет.

Çавăн пекех «Чуваш. ЦИК», «Коммунар», «Липсерия», «Прожектор» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те тухăçлă кок-сагыз туса илнĕ.

П. ПАВЛОВ.

„Новый путь“ колхоза Хĕрлĕ ялав панă

СЕНТЕР. Пушкăрт ялсоветĕнчи «Новый путь» колхоза выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнӳсемшĕн Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă. Çак кунсенче çав ялава алла панă ятпа кунта колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ ячĕпе Хĕрлĕ ялава алла пама ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Лисин юлташ пынă. Лисин юлташ колхозниксемпе колхозницăсене пысăк награда илме тивĕçлĕ пулнăшăн ырă сунса саламларĕ.

— Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртура мала тухса, эсир ЧАССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пултăр. Анчах тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма юрамасть. Ку тĕлĕшпе малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, çĕнĕ çитĕнӳсем тумалла, унсăрăн ялава алран вĕçертме пултаратăр,—тесе асăрхаттарать Лисин юлташ.

Ялава алла илсе, колхоз председателĕ Гаврилов юлташ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малашне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме пулать.

Пухура «Новый путь» колхозпа ăмăртса ĕçлекен «Заря» колхоз председателĕ Кириллов юлташ, кӳршĕри ытти колхозсенчен килнĕ представительсем тухса каларĕç.

«Новый путь» колхоз членĕсем, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлеме, выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн продуктивноçне ӳстерме пулса, конкретлă обязательствăсем илчĕç.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Ăмăртса ĕçлени çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшать

Пирĕн Йĕпреçри «Красный строитель» промартелĕн коллективĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, чылай çитĕнӳсем тума пултарчĕ. Эпир 1944 çулхи 8 уйăхри производство программине пĕтĕм продукци енĕпе 130,6 процент, ĕççыннисене кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 153,1 процент тултартăмăр.

Малта пыракан цехсем хăйсен çулталăкри планне 8 уйăх хушшинчех тултарчĕç. Кӳршек-чӳлмек тăвакан цех 1944 çулхи плана 8 уйăх хушшинче 101,4 процент, тимĕрçĕ цехĕ 108,9 процент тултарнă.

Иккĕмĕш çурçулта атă-пушмак тăвакан цех та лайăх ĕçлеме тытăнчĕ. Цех кашни уйăхрах плана 230—235 процент тултарса пырать. Цех бригадирĕ Баранов юлташ хăй виçшер норма ытла тултарать. Сентябрь уйăхĕн малтанхи 10 кунхи заданине 548 процент пурнăçларĕ. Атă çĕлекен çамрăк мастер П. Волков юлташ кулленхи нормăна 150 процент тултарать.

Кирпĕч туса кăларакан цехри çамрăк хĕрсем стахановла ĕçлеççĕ. Формовщица У. Майорова юлташ кунне 600 кирпĕч туса кăларас вырăнне 700—720 кирпĕч тăвать. К. Евграфовăпа П. Ларина нормăна 110—115 процент тултараççĕ.

Социализмлă ăмăртăва сарса пыни стахановецсен шутне ӳстерчĕ. 1943 çулта стахановецсемпе ударниксем 5—6 çын кăна пулнă пулсан, халĕ вĕсен шучĕ 26 çынна çитрĕ. Вĕсем пурте ĕç нормине 150 процентран пуçласа 300 процента çити тултарса ĕçлеççĕ.

Çак кунсенче рабочисемпе служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнасси çинчен сӳтсе яврăмăр. Пуху сентябрь уйăхĕнчи плана 120 процент, çулталăкри плана уяв тĕлне 90 процент тултарма йышăнчĕ. Кашни цех хăй çине уйрăм обязательство илчĕ. Атă-пушмак цехĕ сентябрь уйăхĕнчи плана 200 процент, кӳршек-чӳлмек тăвакан цех 130 процент тултарма пулчĕç.

Пирĕн артель коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн «Кооплеспром» промартельпе ăмăртăва тухрĕ. Эпир ăмăртура мала тухассине çирĕппĕн шанса тăратпăр.

Д. МИХАЙЛОВ,
«Красный строитель» промартелĕн председателĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче Голланди çĕрĕ çине союзниксен авиадесант çарĕсене татах илсе пырса антарнă тата вĕсем валли çар материалĕсем иле-иле пынă. Çĕр çине аннă чаçсем суйласа илнĕ позицисенче çирĕпленсе ларнă. Çав позицисене вăйлăлатнă. Авиадесант çарĕсен операцийĕсем малалла пыраççĕ. Пĕр районра союзниксен çĕр çинчи çарĕсем çав авиадесант чаçĕсемпе пĕрлешнĕ те ĕнтĕ.

Антверпен хулинчен хĕвелтухăçнерехри районра союзниксен çарĕсем Голланди çĕрĕ çинче çапăçаççĕ. Тăшман çав тери вăйлă хирĕç тăрать пулин те, союзниксен çарĕсем малалла куçса пыраççĕ.

Булонь хулинче союзниксен çарĕсем хула ăшнелле тата ытларах кĕрсе кайнă. Кăнтăр Голландире союзниксем тăшманăн пехоти, артиллерийĕ тата танкĕсем хирĕç тăнине сирсе ярса, Маастрихт хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçнă. Çавăнтан хĕвелтухăçнерехре кĕрешекен чаçсем Убахсберг хулипе Зимпельвельд хулине çитнĕ.

Аахен хулинче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Çав хуларан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Бюзбах хулине тăшмантан тасатнă. Рентген хыçĕнче союзниксен çарĕсем Эйпенран хĕвелтухăçнерехри территорие тăшмантан тасатса пыраççĕ, Гефен хулипе йышăннă.

Сен-Витран хĕвелтухăçнерехре Германи çĕрĕ çинче тăшман союзниксен çарĕсене вăйлăрах хирĕç тăма пуçланă. Союзниксен çарĕсем Брандшейд хулине йышăннă та чикĕрен 6 миля хĕвелтухăçнерехре ларакан Гентхейм хули патнелле кайнă. Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем, Люксембургпа Германи чикки урлă каçса кайса, Гюттинген хулине тытса илнĕ.

Бельфор коридорĕнчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем, Сен-лу-сюрт-Семуз хулинчен хĕвелтухăçнелле 5 миля ытла кайса, Фужероль хулине тытса илнĕ. Понде-Руард хули çывăхĕнче тăшман атакине сирсе янă.

Авиадесант антарнă районра авиаци активлăн кĕрешнĕ. Зенитнăй тупăсене, суднăсене, автомашинăсене тата лавсене нумай пĕтерсе тăкнă е юрăхсăра кăларнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

Сывлăшри çапăçусенче сентябрĕн 18-мĕшĕнче тăшманăн 32 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 33 истребитель пĕтнĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: сентябрĕн 18-мĕшĕнче Италире союзниксен çарĕсен фрончĕн вăтаçĕрти участокĕпе Адриатика участокĕнче çапла калама çук вăйлă çапăçусем пынă. Американецсен 5-мĕш армири чаçĕсем Флоренци хулинчен çурçĕртерехре чылай малалла кайнă, вĕсем унта тата тепĕр паха тӳпеме тытса илнĕ. Фронтăн Адриатика участокĕнче 8-мĕш армири Англипе Канада чаçĕсем Морана шывĕ хĕрринчи укрепление чылай аслăлатнă.

Союзниксен авиацийĕ Çурçĕр-хĕвелтухăç Югославири тата Венгрин вăтаçĕрти пайĕнчи сортировка станцийĕсемпе кĕперсене пыра-пыра тапăннă. Авиацин ытти соединенийĕсем çапăçусем пыракан районра тăшманăн вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕ тунă наступленин вунă кун хушшинчи итогĕсем

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Слободна Югославия» ятлă радиостанци пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕ сентябрь уйăхĕнчи наступленин малтанхи вунă кунĕ хушшинче 98 хулана ирĕке кăларнă. Çав вăхăт хушшинче Югослави чаçĕсем тăшман çулйĕрĕсене темиçе хутчен вăйлăн пыра-пыра çапнă. Югославин оккупантсем усă куракан чугун çулĕсене пурне те юрăхсăра кăларнă. Чугун çулсене мĕн пурĕ 789 километр тăршшĕнче пăсса хунă, чугун çулсем çинчи 320 кĕпере сирпĕнтерсе янă. Вунă кун хушши наступлени туса пырса, Югослави чаçĕсем 24.000 çын вĕлернĕ тата тăшманăн 11.900 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Далмаци çыранĕ патĕнче тăватă кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн Млет утравне тăшмантан тасатнă. Млет утравĕ çинче тата ĕлĕкрех ирĕке кăларнă утравсем çинче 11 хулана тăшман гарнизонĕсен юлашкийĕсенчен тасатнă. Тăшманăн Сумартинри тата Сучерти гарнизонĕсен юлашкийĕсене çавăрса илнĕ те пĕтерсе пыраççĕ. Çав утравсене йышăннине пула, Югослави чаçĕсем Балкан çурутравĕн кăнтăрти районĕсенчен нимĕçсем хăйсен çарĕсене куçарса пыракан тинĕс çулĕсене татнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти энергетика техникумне çакăн пек работниксем кирлĕ: курьерсем, техничкăсем, подсобнăй хуçалăх заведующийĕ, подсобнăй хуçалăх сторожĕ, нимĕç чĕлхине вĕрентекен преподаватель, столяр, кантăк лартакан, кăмака тăвакансем, слесарь, платник. Ĕçукçи—калаçса татăлнă тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Плеханова, 7.

3—1.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: метала хĕртмесĕр ĕçлес ĕçе пĕлекен инженерсемпе техник-технологсем тата экономистсем, плановиксем, бухгалтерсем, конторăра ĕçлекен служащисем (бухгалтер ĕçне вĕренме учениксене те илеççĕ); токарьсем, слесарьсем, штамповщиксем, прессовщиксем, электромонтерсем, литейщиксем, сварщиксем тата ытти рабочисем те (çак ĕçсене вĕренме учениксене те илеççĕ); строительствăра ĕçлекен рабочисем—платниксем, столярсем, штукатурсем, кăмака тăвакансем, малярсем, грузчиксем, лавçăсем тата подсобнăй рабочисем (çаксене общежитине вырнаçтараççĕ).

Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков. Кашни кун 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

5—4.

Чăваш АССР Наркомхозне çакăн пек работниксем кирлĕ: техник, инспектор, бухгалтер, кадрсем тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, старши экономист тата главнăй бухгалтер. Чăвашжилснаб аппаратĕнче ĕçлеме — управляющи, инженер-строитель, товаровед тата старши бухгалтер кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Советов, 5-й этаж, Отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00701. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.